26-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1943
АВГУСТ
13
ЭРНЕКУН
161(6398) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

Совет Информаци Бюровĕнчен

АВГУСТĂН 10-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Августăн 10-мĕшĕнче **БРЯНСК** енче пирĕн войскăсем, тăшман хирĕç тăнине çĕнтерсе, çаплах малалла тапăнса пынă, халăх пурăнакан 30 пункта ытла, вĕсем хушшинче **ХОТЫНЕЦ** район центрĕпе чугунçул станцине (Карачев хулинчен 26 километр хĕвелтухăçнерехре) йышăнса илнĕ.

ХАРЬКОВ енче пирĕн войскăсем ăнăçлăн малалла тапăнса пынă, 8 километртан пуçласа 12 километра çити малалла куçса, халăх пурăнакан 70 пункта ытла йышăнса илнĕ. Вĕсем хушшинче çаксем пур: **ЛИПЦЫ** район центрĕ (Харьковран 20 километр çурçĕр-хĕвелтухăçнерехре), **СТАРЫЙ САЛТОВ** район центрĕ, **ПЕЧЕНЕГИ** район центрĕ, халăх пурăнакан пысăк пунктсем — **БОЛЬШОЙ БОБРИК** (Сумыран 22 километр кăнтăр-хĕвелтухăçнерехре), **БОРОМЛЯ, КИРИКОВКА, КОЗЬЕВКА, ШАРОВКА, БОЛЬШАЯ РОГОЗЯНКА, БОЛЬШИЕ ПРОХОДЫ, ВЕСЕЛОЕ, ПЯТНИЦКОЕ** (Харьковран 35 километр хĕвелтухăçнерехре. Çурçĕр Донец шывĕн хĕвеланăç сыранĕнче), чугунçул станцийĕсем — **СКРЯГОВКА, КИРИКОВКА, СПИЦИН, ГУТЫ, ГАВРИШИ, РОГОЗЯНКА** (Харьковран 22 километр çурçĕр-хĕвеланăçнерехре).

Ытти фронтсенче пирĕн войскăсем çапăçса разведка тунă тата тăшмана хирĕç артиллерипе минометсенчен персе тăнă.

Августăн 9-мĕшĕнче пирĕн войскăсем мĕнпур фронтсенче нимĕçсен 35 танкне персе çĕмĕрнĕ е пĕтерсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата зенитнăй артиллерирен персе, тăшманăн 84 самолетне ÿкернĕ.

☆ ☆ ☆

Брянск енче пирĕн войскăсем çаплах малалла тапăнса пынă.

Орелран çурçĕр-хĕвеланăçнерехре Хотынец станци районĕнчи чугунçул участокĕшĕн хаяр çапăçусем пуçланса кайнă. Нимĕçсем кунта икĕ бронепоезд, пехотăпа танксен пысăк вăйĕсене илсе пынă. Вайлă çапăçусем хыççăн совет чăçĕсем тăшман хирĕç тăнине çĕмĕрсе тăкнă тата 6 километр малалла куçнă, вара вĕсем çурçĕр тата хĕвеланăç енчен Хотынец патнех пырса çитнĕ. Çав вăхăтрах Солдатов юлташ командир пулса тăракан подразделени чăçĕсем Хотынецран кăнтăртарахри Образцово ятлă халăх пурăнакан пункта тытса илнĕ те тăшмана тылран пырса çапнă. Пирĕн войскăсем хаяр çапăçура нимĕçсене аркатса тăкнă, Хотынец район центрĕпе чугунçул станцине йышăнса илнĕ, халĕ каялла чакакан тăшмана хăваласа пыраççĕ. Пирĕн артиллеристсем нимĕçсен пĕр бронепоездне персе çĕмĕрнĕ. Орелран хĕвеланăçнерехре кĕрешекен пĕр соединени чăçĕсем питĕ хăвăрттăн пырса çапса нимĕçсен аэродромне вăркăнса кĕрсе кайнă та 25 самолет, 5 танк, 15 оруди, горючи складне тата 30.000 авиабомба тытса илнĕ.

Кромыран хĕвеланăçнерехре пĕр соединени, тăшман хирĕç тăнине çĕнтерсе пырса, халăх пурăнакан 14 пункта йышăнса илнĕ. Çак пунктсемшĕн пынă çапăçусенче 1.000 гитлеровеца ытла пĕтерсе тăкнă. Тăшманран 10 танк, 6 оруди, ултă кĕпçеллĕ 4 миномет тата боеприпассен складне тытса илнĕ. Тепĕр участокра пирĕн войскăсем, нимĕçсен атакисене сире-сире пырса, халăх пурăнакан пысăк пункт патне пырса çитнĕ. Çак участокра икĕ кун хушши пынă çапăçусенче пирĕн чăçсем нимĕç пехотине пĕр полка çити пĕтерсе тăкнă, 13 оруди, 86 пулемет тата ытти трофейăсем те тытса илнĕ.

* * *

Харьков енче пирĕн войскăсем çаплах ăнăçлăн малалла тапăнса пынă.

Харьковран çурçĕр-хĕвеланăçнерехре тата хĕвеланăçнерехре совет войскисем, тăшманăн пырса çитнĕ резервĕсене пĕтерсе, малалла куçса пынă. Халăх пурăнакан пунктсем чылай йышăнса илнĕ. Пĕр часть çĕрлехи атакăра халăх пурăнакан Большой Бобрик тата Боромля (Сумы хулинчен кăнтăр-хĕвелтухăçнерехре) ятлă пысăк пунктсене йышăнса илнĕ. Пĕр соединени боецĕсем 1.500 гитлеровеца пĕтерсе тăкнă, тĕрлĕ калибрлă 42 оруди, 130 пулемет, 300 лав тата ытти трофейăсем тытса илнĕ. Пĕр чугунçул станцийĕнче нимĕçсенчен тĕрлĕ грузсем тиенĕ 250 автомашина тытса илнĕ. Харьковран çурçĕртерехре тата çурçĕр-хĕвелтухăçнерехре пĕр соединени, 12 километр таран малалла куçса, Липцы район центрне йышăнса илнĕ. Тепĕр соединенири боецсем Çурçĕр Донец шывĕ урлă каçса кайнă та хаяр çапăçу хыççăн Старый Салтов, Печенеги район центрĕсене тата Пятницкое ятлă халăх пурăнакан пысăк пункта йышăнса илнĕ. Тăшмана малалла хăваласа пырса, пирĕн чăçсем нимĕç салтакĕсемпе офицерĕсене 1.000 çынна ытла вĕлернĕ, 12 танка персе çĕмĕрнĕ е пĕтерсе тăкнă. Тăшманран 10 танк, хăй тĕллĕн çÿрекен 7 оруди, 36 полевой оруди, 13 радиостанци, боеприпассен 3 складне тата япаласен складне тытса илнĕ.

Хĕрлĕ Çар боецĕсемпе командирĕсем Украина республикинчи тăван ялсемпе хуласене нимĕç оккупанчĕсенчен ирĕке кăларса пырса, пысăк паттăрлăх кăтартаççĕ. Куксов кĕçĕн лейтенантăн танкĕ тăшманăн огневой позицине çĕмĕрсе кĕрсе кайнă та нимĕçсен 2 танкне çунтарса янă, хăй тĕллĕн çÿрекен 4 орудине пĕтерсе тăкнă тата 80 гитлеровеца вĕлернĕ. Мусатов лейтенант, Тюпин сержант тата Ибрагимов красноармеец хăйсен командирĕ хушнă ĕçе тунă чухне нимĕç автоматчикĕсен взводне тĕл пулнă. Пирĕн боецсем темиçе гитлеровеца вĕлернĕ, нимĕç офицерне амантнă, 19 салтака тыткăна илнĕ. Панасенко красноармеец разведкăра çÿренĕ чухне 3 нимĕçе тыткăна илнĕ те хăйĕн чăçне ситерсе панă.

Пирĕн авиаци хамăрăн тип çĕр çинчи войскăсене активлăн пулăшса пырать. Тăшманăн пехотин колоннисене тата унăн техникине пыра-пыра çапать. Сывлăшри çапăçусенче пирĕн летчиксем кун каçиччен нимĕçсен 46 самолетне персе ÿкернĕ.

* * *

Изюмран кăнтăр-хĕвелтухăçнерехре тăшман пехотин пĕр полкĕ тата танксем ирпе пирĕн позицисене атакăланă. Пирĕн боецсем, нимĕçсене артиллерирен тата пулеметсемпе вăйлăн персе, тăшман атакине сирсе янă. Çапăçу хирĕнче нимĕçсен 460 вилли выртса юлнă тата çунакан 6 танк тăрса юлнă. Тăшманран 4 оруди, 8 пулемет, 2 тягач, 59 пулемет тата 300 винтовка тытса илнĕ.

Пирĕн летчиксем Лозовая станцине пырса тапăннă, тăшманăн чугунçулпа пыракан 7 эшелонне çунтарса янă. Çавăн пекех тата Барвенково, Красноград, Мерефа, Тарановка, Новопавловка станцийĕсенче нимĕçсен çар эшелонĕсем çине бомбăсем вăйлăн пăрахнă.

* * *

Донбасра, Ворошиловградран кăнтăр-хĕвеланăçнерехри районра, нимĕç пехотин пĕр батальонĕ, 15 танк пулăшса пынипе, пирĕн оборонăна çапăçса пĕлме хăтланнă. Нимĕçсен 4 танкĕ, пирĕн минăсем лартнă вырăна пырса кĕрсе, сирпĕнсе кайнă, икĕ танкĕпе хăй тĕллĕн çÿрекен 2 орудине совет артиллерисчĕсем персе çĕмĕрнĕ. Танксен хÿттисĕр тăрса юлнă нимĕç пехотине пирĕн чăçсем саппаласа янă, пĕр пайне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Новороссийскран çурçĕр-хĕвелтухăçнерехре пĕр подразделени, Барыбин командир пулса ертсе пынипе, тăшман тăнă вырăна вăркăнса кĕрсе кайнă та нимĕç чăçĕн штабне аркатса тăкнă. Совет боецĕсем нимĕçсен 30 салтакĕпе офицерне пĕтерсе тăкнă, штабри документсене, 10 радиостанци, 25 станковăй пулемет, 2 оруди, темиçе автомашина тата ытти трофейăсем тытса илнĕ.

* * *

Ленинград фронтĕнче пирĕн подразделенисем кун каçиччен тăшманăн 400 салтакĕпе офицерне пĕтерсе тăкнă. Артиллерирен тата минометсенчен персе, нимĕçсен 57 дзотне, 9 блиндажне, 2 наблюдательнăй пунктне ишсе антарнă е сиенленĕ тата боеприпассен 3 складне сирпĕнтерсе янă.

* * *

Чернигов облаçĕнчи районсенчен пĕринче кĕрешекен партизансен отрячĕ фронт линийĕ патне поездсем нумай çÿрекен чугунçул çинче 2 кĕпере сирпĕнтерсе янă. Тепĕр районра подрывник-партизансем нимĕçсен 2 çар эшелонне ÿпĕнтерсе янă. Каменец-Подольск облаçĕнчи партизансен отрячĕ тăшман эшелонне ÿпĕнтерсе янă. Поезд крушенийĕнче тата взрыв пулнипе паровоз çĕмĕрĕлсе кайнă, 11 цистерна тата бензин пичкисем турттарса пыракан 23 платформа çунса кайнă.

АВГУСТĂН 11-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Августăн 11-мĕшĕнче **БРЯНСК** енче пирĕн войскăсем çаплах малалла тапăнса пынă, 6 километртан пуçласа 10 километра çити малалла куçса, халăх пурăнакан 70 пункта ытла йышăнса илнĕ. Вăл шутра: **СОСНОВО** район центрне, халăх пурăнакан пысăк пунктсене — **АЛЕКСЕЕВКА** (Карачев хулинчен 18 километр хĕвелтухăçнерехре), **БОГОРОДИЦКОЕ, ЯХОНТОВО, РЯТНИЦКОЕ, ХОТЬКОВО, МЫЦКОЕ** ятлă пунктсене илнĕ.

Харьков енче пирĕн войскăсем ăнăçлăн малалла тапăнса пынă, 15 километртан пуçласа 20 километра çити малалла куçса, халăх пурăнакан 50 пункта ытла йышăнса илнĕ. Вăл шутра: **АХТЫРКА** хулине, **КРАСНОКУТСК** хулине, халăх пурăнакан пысăк пунктсене — **МАРХОМОВКА, АЛЕКСЕЕВКА, ВЫСОКОПОРЬЕ, КОВЯКИ, РУССКОЕ ЛОЗОВОЕ, РУССКИЕ** тата **ЧЕРКАССКИЕ ТИШКИ** (Харьковран 12 километр çурçĕр-хĕвелтухăçнерехре), **НЕ ПОКРЫТАЯ, БОЛЬШАЯ БАБКА, КОЧЕТОК** ятлă пунктсене илнĕ. Пирĕн войскăсем çавăн пекех тата **ВОДЯНАЯ** тата **КОВЯГИ** чугунçул станцийĕсене йышăнса илнĕ, çапла вара пирĕн войскăсем ку районра **ХАРЬКОВПА ПОЛТАВА** хушшинчи чугунçула татнă.

Ытти фронтсенче пирĕн войскăсем çапăçса разведка тунă тата тăшмана хирĕç артиллерипе минометсенчен персе тăнă.

Августăн 10-мĕшĕнче пирĕн войскăсем мĕнпур фронтсенче нимĕçсен 85 танкне персе çĕмĕрнĕ е пĕтерсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата зенитнăй артиллерирен персе, тăшманăн 86 самолетне ÿкернĕ.

☆ ☆ ☆

Брянск енче пирĕн войскăсем саплах малалла тапăнса пынă.

Хотынец станцийĕпе район центрне тытса илнĕ хыççăн совет войскисем, тăшман вăйлăн хирĕç тăнине тата минăсем нумай лартса тухнă участоксене çĕнтерсе пырса, малалла куçнă, халăх пурăнакан пунктсене чылай йышăнса илнĕ. Вĕсем хушшинче Сосново район центрĕ тата халăх пурăнакан Алексеевка ятлă пысăк пункт пур (Карачев хулинчен 18 километр хĕвелтухăçнерехре). Пĕр соединени çав çапăçусенче нимĕçсен 2.000 салтакĕпе офицерне çити пĕтерсе тăкнă. Тăшманран тĕрлĕ калибрлă 20 оруди, 20 миномет, 120 пулемет, темиçе вунă автомашина тата çар пурлăхĕ хунă виçĕ склад тытса илнĕ. Пĕр гвардейски чăçăн подразделенийĕсем тăшманăн хаяр контратакине сирсе янă, нимĕçсен 11 танкне (вăл шутра 1 танк «тигр» йышшисем), хăй тĕллĕн çÿрекен пĕр тупă тата 3 противотанковăй тупă пĕтерсе тăкнă. Гварди красноармеецĕ Мясников юлташ нимĕçсем йышăнса тăнă яла кĕрсе вырнаçнă та кун каçиччен асăрхаса тăнă. Каç пулсан вăл хăй чаçне таварăннă. Тăшман çинчен тĕрĕс даннăйсем илнĕ хыççăн пирĕн подразделенисем нимĕçсене сасартăк пырса çапнă та çав ялтан хăваласа кăларнă. Пĕтĕмĕшпех юсавлă 6 танк тата 12 бронемашина тытса илнĕ.

Кромы хулинчен кăнтăр-хĕвеланăçнерехре пирĕн войскăсем тăшманăн темиçе контратакине сирсе янă, малалла куçса, халăх пурăнакан икĕ пункта йышăнса илнĕ. Вăл пунктсем Дмитровск-Орловский хули çывăхĕнчех. Çав пунктсемшĕн пынă çапăçусенче тăшманăн 1200 салтакĕпе офицерне пĕтерсе тăкнă.

Пĕр районра пирĕн малалла тапăнса пыракан войскăсем мирлĕ çынсене 5.000 çынна ирĕке кăларнă, вĕсене нимĕçсем вăйпа фашистсен чуралăхне хăваласа пынă пулнă. Нимĕçсен командованийĕ вырăнти халăха эвакуацилесси çинчен приказ кăларнă. Приказра çапла каласа хăратнă: кам та пулин кивĕ вырăнтах юлма хăтлансан, тарма шухăшласан тата вăрмансенче пытанса юлма хăтлансан, вĕсене пурне те çавăнтах персе пăрахаççĕ, тенĕ. Гитлерла çынсиенсен çак приказне пăхмасăр, совет çыннисем пинĕ-пинĕпе подвалсенче пытанса юлаççĕ, вăрмансене, хирсене тарса пытанаççĕ. Вĕсем хăйсене ирĕке кăларакан Хĕрлĕ Çара хĕпĕртесе кĕтсе илеççĕ.

* * *

Харьков енче пирĕн войскăсем çаплах ăнăçлăн малалла тапăнса пынă.

(Юлашки 2-мĕш страницăра).

Тырпулсене ăнăçлăн пухса кĕртессишĕн, государствăна тырпул памалли обязательствăсене срокчен пурнăçлассишĕн, çак ĕçсене туни çинчен Сталин юлташа пуринчен малтан рапорт пама право илессишĕн социализмлă ăмăртăва анлăн сарар!

РЕСПУБЛИКĂРИ КОЛХОЗСЕНЧЕ ТЫРПУЛСЕНЕ ПУХСА КĔРТЕС ĔÇСЕМ АВГУСТĂН 10-МĔШĔ ТĔЛНЕ МĔНЛЕ ПУЛСА ПЫНИНЕ КĂТАРТАКАН СВОДКА

(Процентпа).

РАЙОНСЕМ	Кĕрхи тата çурхи тырăсене вырни	Капана хывни	Авăн çапни
Куславкка	67,7	20,8	9,7
Вăрнар	63,1	12,1	11,3
Сĕнтĕр	60,5	9,5	7,4
Советски	60,5	10,4	2,4
Сĕнтĕрвăрри	59,6	16,7	9,9
Шупашкар	58,6	24,1	8,3
Елчĕк	57,1	7,8	5,6
Етĕрне	56,5	19,1	10,7
Октябрьски	54,7	13,6	8,8
Ишлей	54,2	15,4	7,5
Тăвай	53,9	9,3	7,7
Çĕрпÿ	53,8	19,7	10,4
Шăмăршă	52,7	31,8	6,4
Вăрмар	51,7	17,6	6,5
Элĕк	51,5	16,9	4,4
Хĕрлĕ Чутай	51,5	28,7	12,6
Шăхасан	50,5	10,5	5,3
Калинино	50,3	9,9	2,1
Йĕпреç	49,8	19,8	20,3
Комсомольски	49,3	10,4	6,1
Чкаловски	44,7	7,1	5,1
Канаш	44,2	21,2	5,7
Красноармейски	43,5	8,9	6,1
Первомайски	40,9	8,9	7,4
Улатăр	39,1	47,5	16,9
Çĕмĕрле	39,1	26,0	10,1
Пăрачкав	33,8	25,3	6,9
Кувакино	23,3	13,6	12,7
Шупашкар хули	60,8	13,8	3,3
ЧАССР тăрăх	51,2	15,6	7,9
Августăн 5-мĕшĕ тĕлне	30,1	0,9	0,5

Тырă памалли графика ирттерсе тултараççĕ

ВАРМАР, августăн 12-мĕшĕ. (Хамăр корр.). Район тырă памалли графика кашни пилĕккунлăхрах ирттерсе тултарать. Августăн 10-мĕшĕ тĕлне виçĕ пилĕккунлăхăн графикне 155 процент тултарнă. Тырă памалли графика пĕрремĕш пилĕккунлăхра 90 процент тултарнă пулсан, иккĕмĕш пилĕккунлăхра вара 111 процент тултарнă. Пилĕккунлăх графикĕсене районри 34 колхоз ирттерсе тултарчĕç. Текешри «Большевик» колхоз (председателĕ Семенов) графика 368 процент, «Красный Кубня» колхоз (председателĕ Архипов) 268 процент, «Красные Шигали» — 213 процент, Калинин ячĕпе тăракан колхоз — 119 процент тултарса, ЧАССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Обкомĕ тырă парас тĕлĕшпе панă графика чыслăн пурнăçларĕç.

Хăшпĕр колхозсем графика пурнăçлас тĕлĕшпе юлса пыраççĕ-ха. «Победа» колхоз (председателĕ Елисеев) виççĕмĕш пилĕккунлăх графикне 25 процент, «Ямбай» — 10 процент, Ворошилов ячĕпе тăракан колхоз — 30 процент çеç тултарчĕç.

500 гектар тырă акнă

ТАВАЙ, августăн 12-мĕшĕ. (Хамăр корр.). Районри 32 колхозран 26-шĕ ĕнер кĕрхи тырăсене выраа пĕтерсе çурхи тырăсем 1.105 гектар вырнă. «Красная Чувашия» колхоз вырнă тырра çийĕнчех капана хывса пырать. Халĕ пурĕ 120 гектар çинчи тырра капана хывса лартнă. Колхоз икĕ кун хушшинче 45 гектар кĕрхи тырă акрĕ.

Августăн 11-мĕшĕ тĕлне районри колхозсем пурĕ кĕрхи тырă 500 гектар акнă, вĕсене пĕтĕмпех сеялкăсемпе акнă.

Сĕнтĕр районĕ Вăрнар районĕн чĕнĕвне йышăнчĕ

СЕНТЕР, августăн 12-мĕшĕ. (Хамăр корр.). Вăрнар районĕнчи колхозниксемпе колхозницăсен паха чĕнĕвне Сĕнтĕр районĕнчи колхозниксем хапăл туса йышăнчĕç. Сĕнтĕр, Оринино, Юнга тата Кăпас ялсоветĕсенчи колхозниксем çак паха чĕнÿ çинчен радио тăрăх пĕлнĕ. Паян кунта вăрнарсем чĕнсе калани тата çав пуçару пирки ВКП(б) Чăваш Обкомĕн бюровĕ йышăннă постановлени пичетленнĕ хаçатсем çитрĕç.

Район центрĕнчи, ялсенчи партипе совет тата комсомол активĕ, колхозсенчи агитаторсемпе вулавçăсем вăрнарсен чĕнĕвĕпе кашни колхознике паллаштарма тытăнчĕç.

Паян районри ялсовет, колхоз председателĕсен, колхозсенчи парторганизацисен секретарĕсен, бригадирсен кустсенчи канашлăвĕсем пулса иртрĕç.

Тырпулсене ăнăçлăн пухса кĕртсе, государство умĕнчи пур обязательствăсене те срокчен пурнăçлани çинчен Верховный Главнокомандующине Сталин юлташа чи малтан рапорт парассишĕн социализмлă ăмăртăва тухса, канашлусем çакăн пек обязательствăсем илчĕç:

Çитес 6 ĕçкунĕ хушшинче пур тĕрлĕ культурăсене те выраа пĕтермелле тата кĕрхи тырăсене капана хывмалла. Çак срокра кашни жнейкăпа, молотилкăпа 20 гектартан кая мар тырă вырмалла.

Авăна çине тăрса çапмалла, талăкра кашни бригадăн икĕ тоннăран кая мар тырă çапмалла.

Кĕракине августăн 20-мĕшĕнче вĕçлемелле, пĕтĕм тырра сеялкăсемпе акса хăвармалла.

Кашни бригадăн кунне государствăна 4-шар центнертан кая мар тырă леçсе тăмалла.

Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли çулталăкри плана пур колхозсен те тата тĕрлĕ выльăхсем енĕпе те октябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне тултармалла.

Çак обязательствăсене ăнăçлăн пурнăçлас тесе, районри нумай колхозниксемпе колхозницăсем иртен пуçласа сĕм тĕттĕм пуличченех вăя шеллемесĕр тимлĕн ĕçлеме, ĕç нормине кулленех икĕ хут, икĕ хут çурă ирттерсе ĕçлеме сăмах параççĕ.

Т. ЙВАНОВ.

Комбайнсем хăçан ĕçе тухаççĕ?

КУСЛАВККА. МТС тырă вырас ĕçе халĕ те кирлĕ пек тытăнман-ха. 14 комбайнпа халĕ пурĕ те 381 гектар çеç тырă выраа пухнă. Руководительсем ĕç çине çиелтен пăхнине пула комбайнсем ĕçе пуçăннă-пуçăнманах вана-вана кайрĕç. Хăшпĕр комбайнерсем ним сăлтавсăрах ĕçлемесĕр тăраççĕ. Сăмахран, Семенов юлташ ĕçлекен комбайн мĕнпурĕ те 5 гектар, Желтухин юлташ комбайнĕ мĕнпурĕ те 2 гектар çеç тырă вырнă. Комбайнер Богданов юлташ 5 талăк хушшинче те 28 гектар çеç выраа пухнă.

Комбайнсем мĕншĕн ĕççĕр тăнипе МТС директорĕ Лаврентьев юлташ тĕплĕн интереслĕнмест. Комбайнерсемпе трактористсем хушшинче Чкалов облаçĕнчи малта пыракан трактористсемпе комбайнерсен паха чĕнĕвне сÿтсе-явнă пулин те, МТС руководителĕсем унтан хăйсем валли тивĕçлĕ вывод туман

И. ШАРКОВ.

РЕСПУБЛИКĂРИ КОЛХОЗСЕНЧЕ СИЛОС ХЫВМАЛЛИ ПЛАНА АВГУСТĂН 10-МĔШĔ ТĔЛНЕ МЕНЛЕ ПУРНĂÇЛАНИНЕ КĂТАРТАКАН СВОДКА

(Процентпа)

Районсем	Силос хывмалли плана тултарни
Вăрнар	168,9
Элĕк	127,8
Комсомольски	117,1
Сĕнтĕр	110,6
Первомайски	104,3
Çĕмĕрле	103,1
Чкаловски	102,0
Октябрьски	101,7
Йĕпреç	101,3
Сĕнтĕрвăрри	101,3
Улатăр	101,1
Канаш	101,1
Вăрмар	100,6
Кувакино	100,6
Елчĕк	100,2
Шупашкар	100,1
Етĕрне	100,1
Красноармейски	96,9
Тăвай	93,9
Куславкка	93,3
Çĕрпÿ	90,8
Шăхасан	90,6
Советски	90,1
Пăрачкав	89,7
Калинино	89,3
Ишлей	81,6
Шăмăршă	79,8
Хĕрлĕ Чутай	67,0
Шупашкар хули	33,3
ЧАССР тăрăх	100,4

Республика силос хывмалли плана тултарчĕ. Анчах çакă вăл силос хывас ĕçе чарса лартмаллине пĕлтермест.

Уйрăмăнах Хĕрлĕ Чутай, Шăмăршă, Ишлей, Калинино, Пăрачкав районĕсен руководителĕсем çакна ăнланмаççĕ. Ку районсем силос хывмалли плана çурри ытларах çеç тултарнă пулин те, иртнĕ пилĕккунлăхра силос хывас тĕлĕшпе пачах та ĕçлемен. Çак районсенчи комсомол организацийĕсем çамрăксене силос хывас ĕçе явăçтарма тăрăшмаççĕ. Партипе совет организацисен руководителĕсем выльăх апачĕ çителĕклĕ хатĕрлес ыйтупа кирлĕ пек интересленмеççĕ.

Çилос хывмалли плана кашни районăн, кашни колхозăн тултармалла.

Пур ĕç те хĕрсе пырать

ИШЛЕЙ. (Телефонпа). Отечественнăй аслă вăрçă фрончĕсенче пирĕн паттăр Хĕрлĕ Çар нимĕç оккупанчĕсене вăйлăн аркатса малалла куçса пыни, çĕршер ялсемпе хуласене ирĕке кăларни колхозниксемпе колхозницăсен ĕçри хастарлăхне ÿстерчĕ.

Паянхи куна пирĕн районри 113 колхозран 70-шĕ кĕрхи тырăсем выраа пĕтернĕ, 1646 гектар çинчен кĕлте турттарса капана хывнă. Киров ячĕпе тăракан колхоз кĕрхи тырăсене эрне хушшинче пухса кĕртрĕ, «Çĕнĕ хунав», «Большевик», «Майăн 1-мĕшĕ» тата ытти нумай колхозсем кĕрхи тырăсене 6 талăк хушшинче пырса пуçтарчĕç.

Ярапайкасси ялсоветĕнчи «Коммунист», «Красная Чувашия», «Автогигант», Доронин ячĕпе тăракан колхозсенче халĕ колхозниксем çурхи тырăсене талăкĕ-талăкĕпех уйран кĕмесĕр выраççĕ. Çак кунсенче Ярапайкасси ялсоветĕнчи колхозсем Хĕрлĕ обоз организацилесе государствăна 30 лав çĕнĕ тырă леçсе пачĕç. Водопьянов ячĕпе тăракан колхоз уборка ĕçĕсене пысăк хăвăртлăхпа туса пырса, государствăна 1943 çулшăн тырă парса татрĕ. Ку колхозра колхозниксем жнейкăсемпе туллин усă кураççĕ, çурхи тырăсене кĕреплелле çавасемпе çулса пухаççĕ.

Малта пыракан чылай колхозсем паян кĕраки тума тытăнчĕç. Буденный ячĕпе тăракан колхоз ĕнер 10 гектар, Калинин ячĕпе тăракан колхоз 15 гектар сеялкăсемпе ыраш акрĕç.

Районра вăрçă вăхăтне шута илсе ĕçлемен колхозсем те пур. «Броневик» колхоз районра чи кая юлса пыраканĕ. Вырса пухман кĕрхи тырăсем кунта халах 30 гектар. Жнейкăсемпе пачах ĕçлемен, колхозра ясли, столовăй уçман. Çавна пула хăшпĕр хĕрарăмсем тухаçлăн ĕçлеймеççĕ.

В. ГУСЬКОВ.

И. В. Сталин юлташ Великобритани посолне А. К. Керр господина тата США посолне П. Г. Стэндли господина йышăнни

Августăн 11-мĕшĕнче СССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн Председателĕ И. В. Сталин юлташ Великобритани посолне А. К. Керр господина тата США посолне В. Г. Стэндли господина йышăннă.

Йышăнура ют çĕршыв ĕçĕсен Халăх Комиссарĕ В. М. Молотов юлташ пулнă.

Пирĕн авиаци Мерефăпа Полтава чугунçул узелĕсене тапăнни

Августăн 11-мĕшĕнче ыран тенĕ чух çĕрле пирĕн авиаци Мерефăпа Полтава чугунçул узелĕсене тапăннă. Тăшманăн çар эшелонĕсемпе çар склачĕсем çине бомбăсем пăрахнă. Пирĕн самолетсен экипажĕсем бомбăсем чугунçул составĕсем çине ÿкнине асăрханă. Пушарсем тухнă. Пушарсенче вăйлă взрывсем пулнă.

Боевой заданирен пирĕн пĕр самолет таварăнман.

Совет Информаци Бюровĕнчен

АВГУСТĂН 11-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВЛĂ СВОДКĂН ВĔÇĔ

Харьковран çурçĕр-хĕвеланăçнерехри тата хĕвеланăçнерехри районта тăшман урăх çĕртен темиçе танковăй дивизи васкаса илсе пырса тăратнă. Çав дивизисем, питех те хаяррăн хирĕç тăрса, совет войскисене малалла тапăнса пынине чарса лартма хăтланаççĕ. Пирĕн войскăсем тăшмана питĕ вăйлăн пыра-пыра çапаççĕ, малалла йăпăлтăн куçса пыраççĕ. Совет боецĕсем çав тери хăвăрт атакăласа, Ахтырка хулине вăркăнса кĕрсе кайнă та урамсенче пулса иртнĕ çапăçусем хыççăн хулана пĕтĕмпех йышăнса илнĕ. Хулашăн пынă çапăçура пĕр соединени 1.600 гитлеровеца вĕлернĕ, нимĕçсен 36 танкне, çав шутра «тигр» йышши 12 йывăр танкне, хăй тĕлĕн çÿрекен 14 орудине, 18 полевой орудине пĕтерсе тăкнă. 250 автомашина, продовольстви 2 складне, горючи складне тата ытти трофейсене те тытса илнĕ. Çавăн пекех пирĕн чаçсем тата Краснокутск хулине йышăнса илнĕ.

Тепĕр участокра пирĕн войскăсем, каялла чакакан нимĕçсене хăваласа пырса, Харькова Полтава хушшинчи чугунçула татнă. Пирĕн автоматчиксен ушкăнĕ, Скудин юлташ командир пулса ертсе пынипе, каç пулсан фашистла юнкерсем хÿтĕлесе тăракан яла вăркăнса кĕрсе кайнă. Совет автоматчикĕсем 150 гитлеровеца вĕлерсе тăкнă та яла йышăнса илнĕ. Юнкерсен ушкăнĕн пуçлăхне тыткăна илнĕ. Хĕçпăшалсемпе боеприпассем нумай тытса илнĕ.

Харьковран çурçĕртерехре тата хĕвелтухăçнерехре пирĕн войскăсем çапăçса малалла тапăнса пынă. Халăх пурăнакан темиçе пункта йышăнса илнĕ. Вăл шутра Харьковран 12 километрти Русские Тишки тата Черкасские Тишки ятлă пунктсене илнĕ. Пĕр танковăй часть нимĕç пехотин батальонне пĕтерсе тăкнă, тăшманăн 17 танкне хăй тĕлĕн çÿрекен 4 орудине çунтарса янă. 18 оруди тата 39 пулемет тытса илнĕ. Нимĕçсен 400 салтакне офицерне тыткăна илнĕ. Пирĕн летчиксем сывлăшри çапăçусенче кун каçиччен нимĕçсен 42 самолетне персе ÿкернĕ.

* * *

Изюм хулинчен кăнтăр-хĕвелтухăçнерехре пирĕн чаçсем çапăçса разведка тунă. Пĕр подразделени, нимĕçсен позицийĕсене атакăласа, гитлеровецсене пĕр ротăна çити пĕтерсе тăкнă. Совет авиацийĕ тăшман колоннисене пыра-пыра çапнă. Нимĕç войскисемпе техникине илсе пыракан эшелонсене пĕтерсе тăкнă. Лозовая, Барвенково, Краснопавловка, Лихачево, Красноград тата Красноармейское станцийĕсем çине бомбăсем пăрахнине пула пушарсем нумай тухнă, пушарсенче вăйлă взрывсем пулнă.

* * *

Ленинград фронтĕнче разведка тăвакан ушкăнсемпе снайперсем тăшман пехотине икĕ ротăран кая мар пĕтернĕ. Артиллеристсем тата минометсемпе персе, тăшманăн 44 дзочĕпе 10 землянкине ишсе антарнă. Пирĕн летчиксем тăшман артиллерийĕн позицийĕсем çине бомбăсем пăрахнă. Боеприпассен 9 складне сирпĕнтерсе янă тата нимĕçсен чугунçул çинче пыракан эшелонне çĕмĕрсе тăкнă.

* * *

Волынь облаçĕнче кĕрешекен партизансен темиçе отрячĕ 10 кун хушшинче тăшманăн 20 çар эшелонне ÿпĕнтерсе янă. Çав крушенисенче 19 паровоз, 195 вагонпа платформа тата цистерна çĕмĕрĕлнĕ. Гитлеровецсен чылай участокĕсенче поездсем çÿрессине чарса лартма тивнĕ. Пĕр район партизанĕсем нимĕçсен пысăк горючи складне вут тивертнĕ.

* * *

Нимĕçсен фашистла оккупанчĕсенчен ирĕке кăларнă Белгород хулинчи И. Шабалов çапла каласа панă: «Çак çулла çуркунне нимĕçсем Белгород хулине тытса илсен, пирĕншĕн хăрушă кунсем пуçланчĕç. Гитлеровецсем пĕтĕм халăха Германие хăвалама тытăнчĕç. Сывмарисемпе ачасене вĕлерсе пĕтерме тытăнчĕç. Нимĕçсем киличчен 50 пин çын пулнă хула часах пĕтĕмпех пушанса юлчĕ. Август уйăхĕн пуçламăшĕнче пĕрре пирĕн мана та тытрĕç те ытти çынсемпе пĕрле, сборнăй пункта илсе кайрĕç. Темиçе кунран пире товар вагонĕсем çине лартрĕç те чугунçулпа илсе кайрĕç. 10 километр кайсан, пирĕн поезд сасартăк чарăнса ларчĕ. Нумайччен тăтăмăр. Кунта эпир çакна илтрĕмĕр: пирĕн летчиксем тăшман тылне кĕрсе тата чугунçул линине татнă. Вилес пек хăраса ÿкнĕ нимĕçсем, пирĕн çинчен манса кайса, таçта çухалчĕç. Çапла танкистсем совет гражданĕсене 1.000 çынна ытла нимĕçсен намăс чуралăхне кайма çăлса хăварчĕç. Эпир çав танкистсен ячĕсене пĕлместпĕр, вĕсен пултаруллă командирне те пĕлместпĕр, анчах вĕсене эпир хамăр пурнăçра яланах асра тытса, пире фашистсен чуралăхĕнчен çăлса хăтарнăшăн тав туса пурăнăпăр».

Фашистла çынçиенсен черетлĕ провокацийĕ

Гитлеровецсем Винница хули хĕррисенче çынсене массăллăн пытарнă шăтăксем тупрăмăр тесе картран вĕçерĕнсех çуйăхма тытăннă. Берлинри радио ку тĕлĕшпе пана нумай пĕлтерÿсенчен пĕринче çапла каланă: «Винница хулин хĕвеланăç хĕрринче çынсене массăллăн пытарнă шăтăксем тупнă... Çырла-çимĕç пахчи участокĕнче, пĕр гектар чухлĕ çĕр лаптăкĕнче, 30 шăтăка яхăн тупнă. Оккупаци вăхăтĕнче, вутă кирлĕ пулнипе, хÿмене сÿтме тытăннă та 1938—1939 çулсенче тата унтан каярахран та вĕлернĕ темиçе çыннăн виллине тупнă», тенĕ.

Нимĕç çарĕ Совет Союзĕпе Германи хушшинчи фронтра поражени тÿснинчен тĕнчери обществăллă шухăша пăрса яма тата оккупациленĕ совет территорийĕ çинче хăйсем тунă тискер ĕçсен йĕрĕсене шăлса хăварма хăтланса, гитлерла жуликсем юлашки кунсенче ултавлă çĕнĕ ĕç турĕç. Августăн 9-мĕшĕнче вĕсем гестапо агенчĕсен тата Германи влаçĕсем Винницăна тара тытса янă провокаторсен «протоколне» пичетлесе кăларнă. Çав провокаторсен ушкăнне вĕсем «суд медицини профессорĕсен комиссийĕ» тесе ят панă. Гитлерла агентсем, хăйсен юнлă ĕçĕсен пысăк практикипе усă курса, айăпа хăйсем çинчен айăпсăр çынсем çине йăвантарма—хăйсем тунă преступленисене совет çыннисем çине тÿнтерме хăтланаççĕ. Çав ирсĕрсен сĕмсĕрлĕхĕ питех те инçете кайнă: вĕсем мирлĕ çынсене асаплантармалли хăйсем юратнă меслетсене—хÿтĕлĕхсĕр çынсене ĕнсерен пере-пере вĕлернисене, мирлĕ совет çыннисене чĕрĕллех çĕр айне пытарнисене тата ыттисене те совет гражданĕсем çине тÿнтереççĕ.

Ирсĕр нимĕç мошенникĕсем ĕçе çапла туса кăтартма хăтланаççĕ: Винница хулинче икĕ çул хушши тăнă хыççăн вĕсем çынсене массăллăн пытарнă шăтăксене ăнсăртран тĕл пулнă пулать. Анчах кунта ăнсăртран пулни нимĕн те çук. Нимĕç палачĕсене Винницăра, Винницăра кăна мар, çавăн пекех тата нимĕçсем вăхăтлăха тытса илнĕ ытти кирек мĕнле хулара та, вилĕ шăтăкĕсене тупма нимĕнле йывăрлăх та пулман. Халăх пурăнакан совет пункчĕсене çĕмĕрсе кĕрсе, гитлеровецсем мирлĕ çынсене тискеррĕн асаплантарнă, хĕрарăмсемпе ватă çынсене тата ачасене пиншерĕн вĕлере-вĕлере пĕтернĕ. Çĕршер те пиншер совет гражданĕсене пере-пере пăрахса, нимĕçсем вĕсен виллисене варсене, противотанковăй лакăмсене тултарнă та çиелтен тăпрапа хупласа хунă.

Минск хулинче Колхоз тата МОПР урамĕсен районĕсенчи шăтăксенче, Кальварийски масар çинче тата хула хĕрринчи варсенче гитлеровецсем асаплантарса тата пере-пере вĕлернĕ совет çыннисен вуншар пин виллисене пытарнă.

Нимĕçсем Витебск хулинче çынсене массăллăн пытарнă масарсене пĕр йывăрлăхсăрах «тупма» пултараççĕ. Çав хулара, çĕнĕ больница хыçĕнчи çырмара, гитлеровецсем 1941 çулхи июлĕн 24-мĕшĕнче тата ун хыççăнхи кунсенче те мирлĕ совет гражданĕсене пиншерĕн пере-пере пăрахса çĕр айне пытарнă.

Кирлĕ пулсан, нимĕç провокаторĕсем Бобруйск крепоçĕн площадĕнче черетлĕ масарсем тупни çинчен те пĕлтерме пултараççĕ. Кунта 1941 çулхи ноябрĕн 8-мĕшĕпе 9-мĕшĕнче гитлеровецсем совет гражданĕсене 7000 ытла çынна персе пăрахса çĕр айне пытарнă.

Фашистла çынçиенсен аллинчен вилнĕ совет çыннисен çав тери нумай виллисене нимĕçсем Киеври Бабий Яр ятлă варта та «тупма» пултараççĕ.

Краматорск хулинче, Меловая Гора ятлă ту айĕнче, нимĕçсем тискеррĕн асаплантарса вĕлернĕ мирлĕ çынсен çĕршер виллисене пытарнă.

Осипенко хули районĕнче Мирликовая балка ятлă варта нимĕç бандичĕсем вĕлернĕ çĕршер те пиншер совет çыннисене пытарнă. 1942 çулăн пуçламĕшĕнче гитлеровецсем пĕр кун хушшинче кăна кунта мирлĕ гражданĕсене 800 çынна персе пăрахнă.

Ваулино ялĕ патĕнчи торф кăлармалли Подгоровски ятлă вырăнта Псков хули çыннисен пĕр пине яхăн виллине пытарнă. Вĕсене фашистла палачсем 1942 çулхи февраль уйăхĕнче вĕлернĕ.

Смоленск çывăхĕнчи Гедеоновка патĕнчи пысăк авăрта фашистсем вĕлернĕ Смоленск хулинчи çынсен—хĕрарăмсемпе ачасен тата ватă çынсен 1800 виллине пытарнă. Нимĕçсем асаплантарса вĕлерессинчен çăлăнса тухнă совет çыннисем каласа панă тăрăх, гитлеровецсем кунта вилнĕ çынсене чĕррисемпе пĕрлех çĕре чикнĕ. Персе пăрахса пытарса хăварнă хыççăн чылай вăхăт хушши çав вырăнти тăпра хускалса тăнă тата çĕр айĕнчен йынăшнă сасăсем илтĕннĕ.

Хĕрлĕ Çар, совет çĕрне нимĕç захватчикĕсенчен ирĕке кăларса пырса, çынсене çавăн пек массăллăн пытарнă çĕнĕрен те çĕнĕ шăтăксене тупать. Нимĕçсем çав шăтăксене хăйсем асаплантарса вĕлернĕ совет çыннисене нумай пиншерĕн пытара-пытара хăварнă. Çапла, сăмахран, Краснодар хулин территорийĕнче тата Краснодар крайĕнче гитлерла мерзавецсем мирлĕ совет гражданĕсене 7000 çынна вĕлернĕ, вăл шутра ачасем нумай пулнă, вĕсене пурне те виçесем тăвакан завод хыçĕнчи противотанковăй лакăма пытарнă.

Ставрополь крайĕн территорийĕ çинче нимĕçсен фашистла тискер кайăкĕсем нимĕн айăпсăр мирлĕ гражданĕсене пиншер те пиншер çынна пере-пере вĕлернĕ, чĕрĕллех çунтара-çунтара янă, «чунилли» ятлă машинăсем ăшĕнче пăчăхтарса вĕлернĕ, çака-çака вĕлернĕ, гестапо подвалĕсенче асаплантарса вĕлернĕ.

Гитлеровецсем тунă çав тери тискер преступленисен йĕрĕсене Хĕрлĕ Çар совет çĕрне нимĕç оккупанчĕсенчен ирĕке кăларса пынă май ытларах та ытларах тупать. Гитлеровецсен юнлă аллинчен вилнĕ мирлĕ совет çыннисен мĕн чухлĕ шăтăкĕсене, мĕн чухлĕ тискер ĕçсене тĕл пулĕ-ха Хĕрлĕ Çар хăйĕн çулĕ çинче!

Вăрçăн малтанхи тапхăрĕнче ăнăçусемпе иртĕхсе кайнă фашистла каш-кăрсем мирлĕ совет çыннисене массăллăн вĕлернине пытарма та кирлĕ тесе шутламан. Халĕ, вăрçăри телей нимĕçсенчен пăрăнсан, гитлерла тискер кайăксем сурăх тирĕпе витĕнме хăтланаççĕ. Палачсем шикленсе ÿкнĕ. Вĕсем хăйсем асаплантарса вĕлернĕ çынсен тăприсем çине туртăнма пуçланă. Берлинри провокаторсем халĕ çынсене массăллăн вĕлерсе пытарнă шăтăксене «ăнсăртран» тупнă тесе пĕлтереççĕ, çапла майпа вĕсем хăйсен çав тери тискер ĕçĕсен йĕрĕсене витсе хăварма тата вĕсене совет влаçĕ çине тÿнтерме хăтланаççĕ.

Гитлеровецсем Винницăра хăйсем асаплантарса вĕлернĕ çынсен виллисем çинче ирсĕр те сĕмсĕр камит тăваççĕ. Айăпсăр юнпа вараланнă алăсемлĕ çынвĕлеренсем хăйсем пĕр хĕрхенмесĕр вĕлернĕ çынсен виллисене чавса кăлараççĕ, çав çынсен тăпри çинче балаганла инсценировкăсем тăваççĕ. Çавăн пек ирсĕрлĕхпе ултава тĕнче халиччен курман-ха.

Гитлерла мерзавецсем Европăна юнпа шÿтерчĕç, миллионшар мирлĕ çынсене вĕлерсе пĕтерчĕç, пиншер хуласемпе ялсенчен масарсем туса хучĕç. Нимĕç çынвĕлеренĕсем темĕнле ултавлă ĕçсем туса хăтлансан та, вĕсем хăйсен çав тери тискер ĕçĕсене пытарма тата ответ тытассинчен пăрăнса юлма пултараймаççĕ. Совет халăхĕн айăплакан хаяр алли палачсене, вĕсем кирек ăçта пулсан та, шыраса тупса ярса тытать, вĕсене айăплисен тенкелĕ çине пăталаса лартать, çав юнĕçен тискер кайăксене тивĕçлипе тавăрать.

СОВИНФОРМБЮРО.

Хĕрлĕ Çар боецĕсене— ăшă тумтирсем

ЭЛĔК, августăн 9-мĕшĕ. (**Хамăр корр.**). Вырăс Сурăмĕнчи «Доброволец» колхоз членĕсем Хĕрлĕ Çарăн çĕнĕ çĕнтерĕвĕпе—нимĕçсен çуллахи наступленине пĕтерсе лартнипе тата пирĕн войскăсем Орелпа Белгород хулисене ирĕке кăларнипе хавхаланса, Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли ăшă тумтирсем пухас ĕçе вăйлатрĕç. Фронтовиксен арăмĕсем А. Соколовăпа А. Королева юлташсем пĕрер мăшăр çăм алшиш, икĕ мăшăр çăм носки, П. Соколова колхозница пĕр мăшăр алса тата тепĕр çĕлĕк пачĕç.

Ку колхозра пĕтĕмпе 38 мăшăр çăм алшиш, 12 мăшăр çăм носки пухăнчĕ. Хамăрăн мухтавлă воинсем валли ăшă тумтирсем пухас ĕçе отечественнăй вăрçă инвалиде Н. Морозов юлташ ертсе пырать. Вăл колхоз счетовочĕ пулса ĕçлет. Çав хушăрах жнейкăпа тырă вырма тухса нормăна 120—130 процент тултарма та ĕлкĕрет.

Х. ЛИСИН.

Колхозсенчи актив „Совет Союзĕн отечественнăй Аслă вăрçи çинчен“ Сталин юлташ çырнă кĕнекене вĕренет

СĔНТЕР, августăн 12-мĕшĕ. (Телефонпа). Районри колхоз активĕ «Совет Союзĕн отечественнăй Аслă вăрçи çинчен» Сталин юлташ çырнă кĕнекене пысăк тимлĕхпе вĕренет. 15 çĕрте кружоксем организациленĕ, вĕсенче пурĕ 323 çын вĕренет. Занятисем ВКП(б) райкомĕн пропагандăпа агитаци отделĕ çирĕплетнĕ план тата темăсем тăрăх пулса иртеççĕ.

Уйрăмах Шомик ялсоветĕнчи кружок лайăх ĕçленине палăртмалла. Ăна пуçламĕш парторганизаци секретарĕ И. Ефремов юлташ ертсе пырать. Унта ялти актив—пурĕ 43 çын вĕренет. Кружок ку таранччен 4 занятиирттернĕ. Кружокра уйрăмах учительница Яронова лайăх вĕренет. Вăл Сталин юлташăн кĕнекине вĕреннипе пĕрлех, совет писателĕсен вăрçă вăхăтĕнчи илемлĕ литература произведенийĕсене вулать, Калинин юлташăн выступленийĕсемпе паллашать.

Шупуçри кружока учительница Яшмолкина юлташ (агитколлектив руководителĕ) ертсе пырать. Унта 12 çын. Яшмолкина юлташ кружок занятийĕсене йĕркеллĕ ирттерет, кружокра вĕренекенсене лайăх пулăшса тăрать. Вăл консультацисемпе калаçусем тăтăшах ирттерет. Кружокра вĕренекенсем пурте тенĕ пекех-агитаторсем. Сталин юлташăн кĕнекине вĕренни вĕсене ялти ĕççыннисем хушшинчи агитациллĕ-массăллă ĕçе кирлĕ пек йĕркелеме пулăшать.

Юлашки вăхăтра Сĕнтĕр ялсоветĕнчи кружок та (руководителĕ Иванова юлташ) йĕркеллĕ ĕçлеме пуçларĕ.

ВКП(б) райкомĕ тата унăн пропагандăпа агитаци отделĕ (заведующийĕ С. Иванов юлташ) Сталин юлташăн çак историллĕ произведенине вĕренекенсене пулăшса тăрать. Нумай пулмасть кружок руководителĕсен семинарне ирттерчĕ. Кунсăр пуçне кружоксем валли политикăллă литература çителĕклĕ таранах тупса панă. Пропагандăпа агитаци отделĕн пуçарăвĕпе кружоксенче вĕренекенсене ушкăнăн-ушкăнăн пухса е пĕчченшерĕн тĕл пулса калаçасси йăлана кĕнĕ. Кустсенче уйăхра 4 хутчен инструкциллĕ канашлу ирттереççĕ. ВКП(б) райкомĕн парткабинечĕ те (заведующийĕ Кабетов юлташ) Сталин юлташăн кĕнекине вĕренекенсене пулăшас тĕлĕшпе начар мар ĕçлет. Унта «Отечественнăй аслă вăрçă» çинчен выставка организациленĕ. Сталин юлташăн кĕнекине вĕренекенсем парткабинета йышлăн çÿреççĕ.

М. КАРПОВ.

Чăваш АССР Совнаркомĕнче

Вырăнти топливо промышленность управленийĕн предприятийĕсен социализмлă ăмăртăвĕн 1943 çулхи июль уйăхĕнчи итогĕсем

Чăваш АССР Совнаркомĕ вырăнти топливо хатĕрлес тĕлĕшпе пыракан социализмлă ăмăртăвăн 1943 çулхи июль уйăхĕнчи итогĕсене пăхса тухрĕ. Ăмăртура Канаш, Шупашкар леспромхозĕсем, Çĕмĕрлери торфопредприяти тата Вырăнти топливо промышленность управленийне пăхăнакан Елчĕкри райлесзаг мала тухнă тесе йышăнчĕ.

Чăваш АССР Совнаркомĕн куçса çÿрекен Хĕрлĕ ялавне Канашри леспромхозрах (директорĕ Лопин юлташ, горсовет исполкомĕн председателĕ Белоусов юлташ) хăварма йышăнчĕ. Вăл 1943 çулхи июль уйăхĕнчи вутă хатĕрлес плана ирттерсе тултарнă. Ĕçре палăрнă рабочисемпе инженерла-техникла работниксене тата служащисене премилеме ăна 15 пин тенкĕ укçа памалла турĕ.

Ĕçре палăрнă рабочисемпе инженерла-техникла работниксене тата служащисене премилеме Совнарком тата Шупашкар леспромхозне (директорĕ Соколов юлташ, горсовет исполкомĕн председателĕ Аникин юлташ) 10 пин тенкĕ, Çĕмĕрлери торфопредприятие (директорĕ Храмков юлташ, главнăй инженерĕ Розов юлташ) 10 пин тенкĕ, Елчĕк райлесзагне (директорĕ Кадышев юлташ, райсовет исполкомĕн председателĕ Осипов юлташ) 5 пин тенкĕ укçа памалла турĕ. Вĕсем пурте июль уйăхĕнчи топливо хатĕрлес плана ирттерсе тултарнă.

Совнарком вырăнти топливо хатĕрлес тĕлĕшпе июль уйăхĕнче Вăрнар, Сĕнтĕрвăрри, Вăрмар, Улатăр, Элĕк, Советски, Комсомольски, Первомайски тата Шăхасан леспромхозĕсемпе райлесзагĕсем лайăх ĕçленине палăртрĕ.

Ют çĕршывсенче

Италири лару-тăру

МИЛАНРИ ÇĔНĔ ДЕМОНСТРАЦИСЕМ

ЛОНДОН, августăн 11-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви çапла пĕлтерет: августăн 10-мĕшĕнче каçхине Миланра çĕнĕ демонстрацисем пулса иртнĕ. Демонстрантсем полицие каялла хĕснĕ. Демонстрацири халăх хушшинче вăрçа чарма ыйтса кăшкăракан сасăсем илтĕнсе тăнă. Демонстрацие Милан гарнизонĕнчи салтаксем те нумайăшĕ хутшăннă.

Сицилири вăрçă ĕçĕсем

ЛОНДОН, августăн 10-мĕшĕ. (ТАСС). Официальнăй йĕркепе пĕлтернĕ тăрăх, союзниксен войскисем фронтăн пур участокĕсенче те çаплах малалла куçса пыраççĕ.

Акăлчансен 8-мĕш армин чаçĕсем Мессина хули патне çитесси 45 километр юлнă.

Августăн 9-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле союзниксен авиацийĕ тăшманăн Мессина хули районĕнчи войскисене, çавăн пекех тата тăшман тылĕнчи транспорт колоннисемпе ытти объектсене атакăланă.

Союзниксен флочĕ, типсĕр çинчи вăйсене пулăшса, çыран районĕсенчи тăшмана пыра-пыра çапать.

Американецсен çар суднисем августăн 8-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле тăшман позицийĕсен тылĕнче çарсем антарнă.

ЛОНДОН, августăн 11-мĕшĕ. (ТАСС). Официальнăй йĕркепе çапла пĕлтереççĕ: Сицилире союзниксен войскисем, тăшман хирĕç тăнине тата вăл лартса хăваракан чăрмавсене çĕнтерсе, çаплах малалла куçса пыраççĕ. Акăлчансен 8-мĕш армийĕ çыран секторĕнче 2 мильăран пуçласа 3 мильăна çити малалла куçнă, Гуардия хулине йышăнса илнĕ (Сицилин хĕвелтухăçĕнчи çыранĕнче, Ачиреале хулинчен çурçĕрелле). Этна тăвĕнчен хĕвеланăçнерехре союзниксен войскисем Бронтерен çурçĕрелле Рандаццо патнелле тапăнса пыраççĕ. Американецсен 7-мĕш армийĕн чаçĕсем, тăшман питĕ вăйлăн хирĕç тăнине çĕнтерсе пырса, акăлчансен 8-мĕш армийĕн малти чаçĕсемпе Бронтерен çурçĕртерехри тата хĕвеланăçнерехри районра çыхăну тытма пуçланă.

СОЮЗНИКСЕН ТИНĔС-ÇАР ФЛОЧĔН ИТАЛИ ÇЫРАНĔСЕМ ПАТĔНЧИ ВĂРÇĂ ĔÇĔСЕМ

ЛОНДОН, августăн 11-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Çурçĕр Африкăри штабĕ пĕлтернĕ тăрăх, августăн 10-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле Англи крейсерĕсемпе эсминецĕсен соединенийĕсем Кастелламмаре ди Стабина (Италире) пенĕ. Ку районра суднăсем тăвакан тата суднăсем юсакан верфьсем ĕçлеççĕ. Çав каçах ытти карапсем Сант—Эфемия заливĕнчен кăнтăртарахри Ватикано сăмсахĕ районĕнчи чугунçул кĕперĕсене пенĕ.

АНГЛИ АВИАЦИЙĔ НЮРНБЕРГ ХУЛИНЕ ТАПĂННĂ

ЛОНДОН, августăн 11-мĕшĕ. (ТАСС). Англин авиаци министерстви çапла пĕлтерет: августăн 11-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле Англи бомбардировщикĕсем Нюрнберг хулине вăйлăн тапăннă. Нюрнберг вăл—Кăнтăр Германири питĕ вăйлă промышленноçлă хула тата чугунçул центрĕсенчен пĕри пулса тăрать.

ВЕНГРИРЕ ГЕРМАНИЕ ХИРĔÇЛЕ ДЕМОНСТРАЦИСЕМ ПУЛСА ИРТНĔ

ЛОНДОН, августăн 10-мĕшĕ. (ТАСС). Шведсен «Афтонтиднинген» ятлă хаçачĕн Бернри корреспонденчĕ çапла пĕлтерет: Венгрире темиçе хулара Германие хирĕçле пысăк демонстрацисем пулса иртнĕ. Демонстрацири халăх нимĕçсене Венгрирен хăваласа кăларма ыйтнă.

ЮГОСЛАВИРЕ ÇĔНĔ ПРАВИТЕЛЬСТВО ТУНĂ

ЛОНДОН, августăн 11-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви Югославире çĕнĕ правительство туни çинчен пĕлтерет. Çĕнĕ правительство составĕнче: премьер-министр, вăлах ютçĕршыв ĕçĕсен министрĕ — Боджиар Пурич, çар министрĕ—Михайлович тата ыттисем те.

АНГЛИ ÇЫРАНĔСЕНЕ АРТИЛЛЕРИ ПЕНИ

ЛОНДОН, августăн 11-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви çапла пĕлтерет: Германин Франци çыранĕнче лартнă йывăр орудийĕсем паян Па-де-Кале проливĕ урлă пеме тытăннă. Кашни 5—20 минутра иртнĕ хыççăн пĕрер персе, мĕнпурĕ 12 хутран ытла пенĕ. Хăшпĕр снарядсем Дувр çывăхĕнче ÿкнĕ.

КАНАДА ПИЧЕЧĔ СОВЕТ ВОЙСКИСЕН ВĂРÇĂРИ ÇĔНТЕРĔВĔСЕМ ÇИНЧЕН

ОТТАВА, августăн 10-мĕшĕ. (ТАСС). Канадăри хаçатсем çак кунсенче пуринчен те ытларах Хĕрлĕ Çарăн вăрçăри çĕнĕ çĕнтерĕвĕсем çинчен çыраççĕ. Торонтора тухса тăракан «Стар» ятлă хаçат çапла çырать: Хĕрлĕ Çар Орел районĕнче тунă çĕнтерÿ Германи войскисене Сталинград патĕнче аркатса тăкнă хыççăн çак вăрçăри чи пысăк ĕçсенчен пĕри пулса тăрать.

Торонтора тухса тăракан «Глоб Энд Мейл» ятлă хаçатăн вăрçă ĕçĕсен обозревателĕ Рид çакна паллă туса çырать: Орел районĕнчи çĕнтерÿ вăрçăн малалли ĕçĕсене стратеги тĕлĕшĕнчен хăватлăн вăйлатса ярĕ, тет.

АНГЛИ ХАÇАЧĔСЕМ ГИТЛЕРЛА ПРЕСТУПНИКСЕМ СОВЕТСЕН ТЫТКĂНА ЛЕКНĔ ÇАР ÇЫННИСЕНЕ КĔЛЕМЕ ÇАПНИ ÇИНЧЕН

ЛОНДОН, августăн 11-мĕшĕ. (ТАСС). «Санди диспетч» ятлă хаçат хăйĕн умстатьинче гитлеровецсем тыткăна лекнĕ красноармеецсене кĕлеме çапни çинчен çырнă. Унта çапла каланă: «Германие тата унпа пĕр каварлисене тавăрмалли вăхăт çитсен, Совет Союзĕнчи халăхсем Англипе Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсенчи халăхсемпе пĕрле судья вырăнĕсене йышăнса ларĕç. Ун чухне вара вырăс халăхĕ çине тапăнса ÿкнĕ хăрушлăхсене астуса илни вырăнлă пулĕ; ун чухне çакна пĕлсе ăнланса тăрас пулать: Россия темĕн пек хытă айăплама ыйтсан та, çав питех те хаяр тавăру вăл Россия хăй тÿссе курнă асапсенчен çеç тухса тăрать».

Бенеш Мускава килес ыйту пирки

СТОКГОЛЬМ, августăн 10-мĕшĕ. (**«Правда» хаçатăн Стокгольмри корреспондентĕнчен**). Лондонри «Рейнольдс ньюс» ятлă хаçат çак кунсенче çакăн пек хыпар пичетлесе кăларчĕ: Бенеш ку таранччен те Мускава тухса кайманнинчен Англире тĕлĕнеççĕ, тет. Лондонра çакна лайăх пĕлеççĕ: ССР Союзĕпе Чехословаки пĕр-пĕрне пулăшса тăрасси çинчен договор тума Чехословаки президенчĕ Бенеш июль уйăхĕнче Мускава тухса кайма хатĕрленнĕ. Пĕлтернĕ тăрăх, Совет правительстви Чехословаки правительствин çав сĕнĕвĕ пирки хăй килĕшни çинчен пĕлтернĕ пулин те, Бенеш Мускава каясси темĕн пирки Англири хăшпĕр ушкăнсенче кăмăла кайман, çавăн пирки ĕнтĕ Бенеш Мускава каясси халлĕхе вăраха тăсăлать.

ЧЕРЧИЛЛЬ КАНАДĂНА ПЫНĂ

ЛОНДОН, августăн 10-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви çапла пĕлтерет: паян Канадăна Черчилль çитнĕ.

Официальнăй йĕркепе кăларнă пĕлтерÿре çапла каланă: Черчилль Канадăна вăрçă ыйтăвĕсем пирки калаçма килнĕ, тенĕ. Черчилльпе пĕрле советниксем чылай пынă.

Канадăн премьер-министрĕпе Маккензи Кингпа калаçса татăлнă хыççăн Черчилль Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсен президенчĕпе Рузвельтпа тĕл пулмалла.

Пĕлтерÿ

Августăн 15-мĕшĕнче, каçхине 7 сехетре, Н. К. Крупская ячĕпе тăракан садра **Сталинла авиаци кунĕ çинчен** доклад пулать.

Доклад хыççăн гарнизонпа пирĕн фабрикин вăйĕсемпе художествăллă пай пулать.

ВКП(б) Горкомĕн пропагандăпа агитаци отделĕ тата ДКА.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

ШУПАШКАРТИ КИНОТЕАТР

августăн 10-мĕшĕнчен пуçласа кашни кун саслă илемлĕ

НЕУЛОВИМЫЙ ЯН

ятлă çĕнĕ фильм кăтартать.
Сеанссем çак вăхăтра пуçланаççĕ:
12, 14, 16, 18, 20 тата 22 сехетре.

Часах

ЛЕРМОНТОВ

ятлă фильм кăтартма пуçлаççĕ.

ШУПАШКАРТИ В. Э. С. СТРОИТЕЛЬСТВИНЕ çакăн пек специалистсем кирлĕ: слесарьсем токарьсем, электромонтерсем, кочегарсем, локомобиль машинисчĕсем, платниксем, штукатурсем, грузчиксем, табелажниксем тата строительствăпа монтаж ĕçĕнче кирлĕ ытти специалистсем.

Çав асăннă специальноçсемпе ĕçлеме вĕрентмешкĕн тата учениксене йышăнаççĕ.

Рабочисене пурне те общежитине вырнаçтараççĕ тата ОРС-ăн хупă магазинĕсемпе столовăйĕсем çумне çирĕплетеççĕ.

2—2.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати, ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редакци секретарĕн—4—26, парти пурнăç пайĕн—3—99, промышленноçпа ялхуçалăх пайĕн—5—31, издательство конторин — 0—23.

НТ 1801 Типография №1 Управления полиграф. промышленности при СНК ЧАССР. Заказ №2 Ф. б. 53 88 п. л.